26-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1944
ЯНВАРЬ
21
ЭРНЕКУН
15(6510) №

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĚ

Арми генералне ГОВОРОВА

ЛЕНИНГРАД фрончěн çарěсем, ПУЛКОВО районěнчен тата ОРАНИЕНБАУМРАН кăнтăртарахра наступлени пуçласа ярса, нимěçсен нумай вăхăтлăха тунă, вăйлă çирěплетнě, шалалла инçете тăсăлса выртакан оборонине татнă та пилěк кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн кашни енче 12 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçнă, татса кěнě вырăна наступлени пыракан кашни участокра фронт тăрăх 35 километртан пуçласа 40 километр таран аслăлатнă.

Çапла нимěçсен оборонине татса кěнине пула фронт çарěсем январěн 19-мěшěнче КРАСНОЕ СЕЛО хулине, нимěçсем крепость туса хунăскерне, штурмласа тытса илнě тата тăшман оборонин çавăн пекех хăватлă тěреклетнě пунктне, çулсен паха узелне—РОПШАНА йышăнса илнě.

Çав наступленире пирěн çарсем нимěçсен çичě пехотнăй дивизине йывăр çухатусем кӳнě тата тăшманăн ЛЕНИНГРАД хулине ялан персе тăнă йывăр артиллерийěн пысăк ушкăнне тытса илнě.

Нимěçсен оборонине татнă çěрте тата КРАСНОЕ СЕЛОПА РОПШАШĂН пынă çапăçусенче МАСЛЕННИКОВ генерал-полковникăн, ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, СИМОНЯК генерал-майорăн, АНДРЕЕВ генерал-майорăн, ФАДЕЕВ генерал-майорăн, РОМАНЕНКО полковникăн çарěсем, артиллери генерал-майорěн МИХАЛКИНĂН, артиллери генерал-майорěн ЧАРНЯВСКИН артиллерисчěсем, ЖУКОВ полковникăн танкисчěсем тата авиаци маршалěн ГОЛОВАНОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчěн РЫБАЛЬЧЕНКĂН тата авиаци генерал-лейтенанчěн САМОХИНĂН летчикěсем чапа тухнă.

Тунă çěнтерěве ялан лăхa палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмăнах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «КРАСНОСЕЛЬСКИ» тата «РОПШИНСКИ» тесе ят парас тата вěсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январěн 19-мěшěнче, 21 сехетре пирěн ТĂВАН ÇĚРШЫВ столици МУСКАВ, икçěр çирěм тăватă тупăпа çирěм хут пěр харăс персе, нимěçсен оборонине татнă тата КРАСНОЕ СЕЛО хулине РОПШАНА тытса илнě Ленинград фрончěн паттăр çарěсене ТĂВАН ÇĚРШЫВ ячěпе салют парать.

Питě чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мěнпур çарсене, нимěçсен оборонине татса КРАСНОЕ СЕЛО хулипе РОПШАШĂН пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çěршывăн ирěклěхěпе никама пăхăнманлăхěшěн пыракан кěрешӳре вилнě геройсене ěмěр-ěмěр мухтав!

Нимěç захватчикěсене — вилěм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзěн Маршалě И. СТАЛИН.

1944 çулхи январěн 19-мěшě.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĚ

Арми генералне МЕРЕЦКОВА

ВОЛХОВ фрончěн çарěсем, НОВГОРОД хули енче наступлени пуçласа ярса, ВОЛХОВ шывě тата ИЛМЕНЬ кӳллин тури пайě урлă каçнă та, нимěçсен нумай вăхăтлăха тунă, вăйлă çирěплетнě оборонине татса, паян, январěн 20-мěшěнче, тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр туса, хамăр Тăван çěршывăн хуçалăхпа политикăллă паха центрне — НОВГОРОД хулине, çулйěрсен пысăк узелě тата нимěçсен оборонин хăватлă тěреклетнě пункчě пулса тăраканскере, штурмласа тытса илнě.

Нимěçсен оборонине татнă çěрте тата НОВГОРОД хулишěн пынă çапăçусенче КОРОВНИКОВ генерал-лейтенантăн, КУЗНЕЦОВ генерал-полковникăн, НИКУЛЬСКИЙ генерал-майорăн, АРТЮШЕНКО генерал-майорăн, ПАНИН генерал-майорăн, СОЛОВЬЕВ генерал-майорăн, БУРАКОВСКИЙ генерал-майорăн, ЧЕРНЫШЕВ генерал-майорăн, РОГОВ полковникăн, ОРДАНОВСКИЙ полковникăн, КАЛИНОВСКИЙ полковникăн, БЕЛОВ полковникăн, РАДЫГИН полковникăн, СЕБОВ полковникăн çарěсем, артиллери генерал-лейтенанчěн ДЕГТЯРЕВĂН, артиллери генерал-майорěн ДОРОФЕЕВĂН, СЕДАШ полковникăн артиллерисчěсем, танковăй çарсен генерал-майорăн КОНОНОВĂН, УРБАНОВ полковникăн, БАЧАКАШВИЛИ подполковникăн танкисчěсем тата авиаци генерал-лейтенанчěн ЖУРАВЛЕВĂН летчикěсем чапа тухнă.

Тунă çěнтерěве ялан лăха палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «НОВГОРОДСКИ» тесе ят парас тата вěсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январěн 20-мěшěнче, 20 сехетре, пирěн Тăван çěршыв столици МУСКАВ, икçěр çирěм тăватă тупăпа çирěм хут пěр харăс персе, нимěçсен оборонине татнă тата НОВГОРОД хулине тытса илнě Волхов фрончěн паттăр çарěсене Тăван çěршыв ячěпе салют парать.

Питě чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мěнпур çарсене, нимěçсен оборонине татнă çěрте тата НОВГОРОД хулишěн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çěршывăн ирěклěхěпе никама пăхăнманлăхěшěн пыракан кěрешӳре вилнě геройсене ěмěр-ěмěр мухтав!

Нимěç захватчикěсене — вилěм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзěн Маршалě И. СТАЛИН.

1944 çулхи январěн 20-мěшě.

Совет Информаци Бюровěнчен

ЯНВАРĚН 19-МĚШĚНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Арми генералě ГОВОРОВ командир пулса ертсе пыракан ЛЕНИНГРАД фрончěн çарěсем, ПУЛКОВО районěнчен тата ОРАНИЕНБАУМРАН кăнтăртарахра пуçласа янă наступленке вăйлатса пырса, январěн 19-мěшěнче КРАСНОЕ СЕЛО хулине, нимěçсем крепость туса хунăскерне, штурмласа тытса илнě тата тăшман оборонин çавăн пекех хăватлă тěреклетнě пунктне, çулсен питě паха узелне РОПШАНА йышăнса илнě. Пилěк кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн пирěн çарсем кашни енче 12 километртан пуçласа 20 километр таран малалла кайнă, татса кěнě вырăна наступлени пыракан кашни участокра фронт тăрăх 35 километртан пуçласа 40 километр таран аслăлатнă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла ирěке кăларнă. ОРАНИЕНБАУМРАН кăнтăртарахра наступлени туса пыракан çарсем ПЕТЕРГОФ хулине тата ГОСТИЛИЦЫ, НОВАЯ, ПЕТРОВСКАЯ, КОЖЕРИЦЫ, ВИЛПОВИЦЫ, ИСАЕВО-МАЛКУНОВА, ДЯТЛИЦЫ, СОКУЛИ, ЕЛАГИНО, ВОЛОСОВО, ГЛЯДИНО, ХАБОНИ, НИКОЗЫМЯГГИ, НИЖНЯЯ КИПЕНЬ, МАЛЫЕ ГОРКИ, БОЛЬШИЕ ГОРКИ, ЛИПИЦЫ ятлă пысăк ялсене тытса илнě. ПУЛКОВО районěнчен наступлени туса пыракан çарсем ФИНСКОЕ КОЙРОВО, БОЛЬШОЕ ВИТТОЛОВО, АЛЕКСАНДРОВКА, СОБОЛЕВА, КОНСТАНТИНОВКА, НИКОЛАЕВКА, ПАЮЛА, РОД, ГОРСКАЯ, ДУДЕРГОФ, ПИККОЛА ятлă пысăк ялсене тытса илнě.

Çав наступленире ЛЕНИНГРАД фрончěн çарěсем нимěçсен çичě пехотнăй дивизине йывăр çухатусем кӳнě тата çакăн пек трофейăсем тытса илнě: тěрлě калибрлă тупăсем—195, вăл шутран Ленинграда персе тăнă артиллери ушкăнěнче пулнă 36 йывăр тупă, вěсен калибрě 152 миллиметртан пуçласа 406 миллиметр таран, «Фердинанд» йышши хăй тěллěн çӳрекен 17 тупă; танксем—16, вăл шутран «тигр» йышши 7 танк; минометсем—109 тата стрелоксен хěçпăшалěпе боеприпассем нумай. Пěтерсе тăкнă: тěрлě калибрлă тупăсем—102, танксем—58, минометсем—140, пулеметсем—371.

Пěр пин нимěç салтакěпе офицерне ытла тыткăна илнě.

Çапăçу хирěнче тăшманăн салтакěсемпе офицерěсен 20.000 виллн ытла выртса юлнă.

Арми генералě МЕРЕЦКОВ командир пулса ертсе пыракан ВОЛХОВ фрончěн çарěсем НОВГОРОД хулинчен çурçěртерехре пилěк кун хушши вăйлăн çапăçнă хыççăн 30 километр таран малалла кайнă, татса кěнě вырăна фронт тăрăх 50 километр таран аслăлатнă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла ирěке кăларнă, вăл шутра ЛЮБЦЫ, КОПЦЫ, ВЕШКИ, АНДРЮХИНОВО, КОТОВИЦЫ, КРЕЧЕВИЦЫ, ХУТЫНЬ, НЕКОХОВО, БОЛЬШЕВОДСКОЕ, ЧЕЧУЛИНО, МОТОРОВО, СТРЕЛКА, ТРУБИЧИНО, ВЯЖИЩЕ, СЫРКОВО ятлă пысăк ялсене, ПОДБЕРЕЗЬЕ, ВИТКА, БОЛОТНАЯ ятлă чугун çул станцийěсене тытса илнě тата НОВГОРОДПА ЛЕНИНГРАД хушшинчи чугун çула татнă.

НОВГОРОДРАН кăнтăртарахра пирěн çарсем ИЛЬМЕНЬ кӳллин тури пайě урлă ăнăçлăн каçса кайнă, ТРОИЦА, БЕРЕГОВЫЕ МОРИНЫ, СТАРАЯ РАКОМА, НОВАЯ РАКОМА, ГОРНЫЕ МОРИНЫ, ЗДРИНОГА, КОЗЬНЕВО, ТРИ ОТРОКА, ЖЕЛКУН, МОИСЕЕВИЧИ, НЕРОНОВ БОР, ГОРКИ, СОСНЕЦ, ХРАМЗИНО, ТОЛСТИКОВО ятлă ялсене тытса илнě, НОВГОРОДПА ШИМСК хушшинчи шоссепе чугун çула татнă.

Январěн 19-мěшěнче пирěн çарсем НОВОСОКОЛЬНИКИРЕН çурçěртерехре, тăшман хирěç танкне çěнтерсе, çаплах малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнě.

НОВОГРАД-ВОЛЫНСКИЙ хулинчен хěвеланăçперехре пирěн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, Ровно облаçěнчи ГОЩА ятлă район центрне тытса илнě, çавăн пекех тата ытти темиçе яла йышăнса илнě.

ХРИСТИНОВКĂРАН çурçěртерехре пирěн çарсем тăшман пехотипе танкěсен пысăк вăйěсен контратакисене ăнăçлăн сире-сире янă, тăшмана çынсемпе техника енчен пысăк çухатусем кӳнě.

Фронтăн ытти участокěсенче чылай пунктсенче тěллěк-тěллěн çапăçнă.

Январěн 18-мěшěнче пирěн çарсем мěнпур фронтсенче нимěçсен 46 танкне персе çěмěрнě е пěтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 11 самолетне персе ӳкернě.

(Вěçě 2-мěш страницăра)

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĚН УКАЗĚ

И. М. Майский юлташа Ěçлěх Хěрлě Ялав орденěпе наградăласси çинчен

Совет государствишěн уйрăмах паха ěçсем тунăшăн, Иван Михайлович Майский юлташа, вăл çурални 60 çул тултарнă май, Ěçлěх Хěрлě Ялав орденěпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумěн Председателě М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумěн Секретарě А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи январěн 18-мěшě.

ЛЕНИН ПУРНĂÇĚПЕ ĚÇĚСЕМ ÇИНЧЕН ДОКЛАДСЕМПЕ ЛЕКЦИСЕМ

Халăхсен аслă çулпуçě Владимир Ильич Ленин вилнěренпе çирěм çул тултарнине паллă тăвас тесе, ВКП(б) Шупашкар хула комитечě чылай ěçсем тунă. Январěн 18-мěшěнче агитаторсемпе докладчиксем валли лекци туса ирттернě.

Халě предприятисемпе учрежденисенче калаçусем, лекцисемпе докладсем пулса иртеççě. Январěн 21-мěшěнче Советсен çуртěнче траурлă лару пулать.

ВКП(б) хула комитечěн парткабинечě агитаторсемпе докладчиксем валли консультаци парас ěçе организациленě. Парткабинетра Ленинăн пурнăçěпе ěçěсем çинчен калакан выставка тунă.

ЛЕНИНСĂР—ЛЕНИН ÇУЛĚПЕ

Д. МАНУИЛЬСКИЙ

Çирěм çул каярах В. И. Ленинăн чěри тапма чарăнчě. Бăл—гениллě мыслитель, большевиксен хăватлă, чăн-чăн халăх партине тунă, хăйěн вěрентěвě тěрěссине историллě событисем урлă кăтартса панă, аслă революцие организацилесе ертсе пынă, Совет государствине туса хунă —çакăн пек çын пулнă Ленин. Пирěн халăх асěнче тата пěтěм тěнчери ěçхалăхěн асěнче Ленинăн çакăн пек сăнě ěмěр-ěмěр пурăнě.

Ленин вěрентнипе, Сталин ертсе пынипе большевиксен партийěпе совет халăхě çав тери пысăк улшăнусем турěç, çак улшăнусем пирěн çěршывăн сăнне палламалла мар улăштарчěç. Çакна пула кăна эпир çав тери çирěп çар, малта пыракан индустрипе колхозлă строй тума пултартăмăр, ССР Союзěнчи халăхсене нихăçан çěмěрейми туслăхпа пěтěçтертěмěр, вěсене Сталинла Конституци ялавě айне пěрлештерсе, хамăр Тăван çěршыва çав тери вăйлă та тискер агрессора хирěç,—фашистла Германие хирěç, кěрешме хатěрлесе çитертěмěр.

«Хальхи вăрçă,—тенě Сталин юлташ хăйěн 1943 çулхи ноябрěн 6-мěшěнче тунă докладěнче,—Ленинăн паллă кăтартăвне—вăрçă кашни халăхăн мěнпур материальнăй тата духовнăй вăйěсене пур енчен те тěрěслесе тухни пулса тăрать, тесе кăтартса панине—пěтěмěшпех çирěплетсе пачě. Вăрçăсен историйě çакна вěрентет: хуçалăх аталанăвěпе организацийě тěлěшěнчен, хăйěн çарěсен опычěпе ăсталăхě тата çапăçури вăй-хăвачě тěлěшěнчен хăйěн тăшманěнчен вăйлăрах государство кăна çав тěрěслеве тӳссе ирттерме пултарать».

Совет Союзě çине 1941—1942 çулсенче ӳкнě вăрçă йывăрлăхěсене çěр чăмăрě çинчи пěр государство та тӳссе ирттереймен пулěччě, Совет государстви çав йывăрлăхсене чыслăн тӳссе ирттерчě. Отечественнăй вăрçăн иртнě тапхăрěн итогěсем пирěн халăхăн тата ытти çěршывсенчи халăхсен кунçулне татса паракан çак факта тепěр хут çирěплетсе параççě.

Хěрлě Çар Сталинград патěнче пуçласа янă наступлени, Курск патěнчи аслă çапăçусем патне илсе пынă тата Днепр урлă ăнăçлăн каçма пулăшнă наступлени çаплах ăнăçлăн малалла пырать. Нимěçсем совет çарěсем малалла куçса пырассине çак юханшыв чикки çинче чарса лартма хăтланни путланса ларчě.

Юлашки икě уйăх хушшинчи çапăçусенче кăна гитлерла çар 46 дивизи, 6.000 танка яхăн çухатрě. 1943 çулхи ноябрěн 6-мěшěпе 1944 çулхи январěн 15-мěшě хушшинче Хěрлě Çар Украина столицине — Киева, темиçе область центрне тата район центрěсене 100 ытла, халăх пурăнакан темиçе пин пункта ирěке кăларчě, пысăк чугун çул узелěсене тытса илчě. Вěсем хушшинче Коростень, Казатин, Знаменка, Сарны тата ыттисем те.

Хěрлě Çар хěвеланăçнелле çěнтерӳллěн куçса пыни пěтěм тěнчене пирěн Верховный Главнокомандованин генилле стратегийěпе тактикине, пирěн генералсемпе офицерсен çав тери пысăк ăсталăхне, совет çарěсен сержанчěсемпе рядовойěсен составě çар ěçне лайăх пěлнине тата вěсен геройла вăй-хăват тапса тăнине кăтартса пачě. Хěрлě Çар, Сталин каланă пек, ку чухнехи чи вăйлă, чи çирěп çар пулса тăчě.

Хěрлě Çар нимěç империалисчěсен вăрçă машинине тапăннине тӳссе ирттерчě, ăна вăл пирěн совет тылě, пирěн промышленность, колхоз стройě, социализм çěршывěн пěтěм халăх хуçалăхě пулăшса пынă пирки тӳссе ирттерме пултарчě.

Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра çěршыва сыхлас ěçре Сталинла пилěкçуллăхсем пысăк вырăн йышăнса тăни яр-уççăн курăнчěç. Уралри иккěмěш металлурги базине, Çěпěрти, Вăтам Азири тата çěршывăн ытти районěсенчи промышленность строительствисене, Ленин каланисене, пирěн халăх Сталин юлташ ертсе пынипе пурнăçа кěртрě. ССР Союзěнчи халăхсен аслă çулпуçě Сталин юлташ генилле витěр курса тăрса, событисем мěнле пулса пырассине палăртса пачě, çěршыва вăрçă енěпе те, экономика енěпе те тискер те ултавлă тăшманпа пěр пěччен хире-хирěç тăрса çапăçма хатěрлесе çитерчě.

Ленин малтанах кăтартса хăварнă колхозлă строй революцилле пысăк улшăнăвăн результачě пулса тăчě, вăл хăйěн малашнехи результачěпе 1917 çулти Октябрьти революцилле улшăнупа пěртан. Парти ертсе пынипе, Сталин юлташ ертсе пынипе, совет хресченěсем тунă колхозсем ялхуçалăхне çěклемелли, хресченсен пурнăçне лайăхлатмалли, ěç тухăçне ӳстермелли, машина техникине алла илмелли чи лайăх май анчах мар, вăл тата ял çыннисене коллективлă пурăнма вěрентмелли, пěтěм халăхăн интересěсене ăнланса илме вěрентмелли, совет патриотизмне çěклемелли чи лайăх шкул та пулса тăчě. Вăрçă условийěсенче колхоз стройě хăйěн вăйěпе тěреклěхне, ялхуçалăхри паллă районсене вăхăтлăха çухатнă пулин те, ялхуçалăх производствине йěркеллěн туса пыма пултарнине тата Хěрлě Çарпа çěршыва апат-çимěç, промышленноçа

(Юлашки 2-мěш страницăра).

ЛЕНИНСĂР—ЛЕНИН ÇУЛĔПЕ

Юлашки

чĕртавар тапти-сыпписĕр парса тăма пултарнине кăтартса пачĕ.

Халăх хуçалăхĕнчи совет системи хамăрăн çĕршыва кĕске вăхăтрах пĕрлĕхлĕ боевой лагерь туса хума май пачĕ. Пирĕн правительство хăрушă вырăнсенчи предприятисене хăвартăн куçарса, вĕсен ĕçне çĕнĕ вырăнта йĕркелеме пултарчĕ.

Пĕтĕм ĕçсен ăнăçлăхне сынсем, Ленин—Сталин партийĕ пăхса çитĕнтернĕ çынсем татса пачĕç, татса параççĕ те. Сталинла туслăхпа пĕтĕçнĕ, большевиксен партийĕ пурнăçпа культура ÿссе чечекленекен çутă çул çине кăларнă Совет Союзĕнчи халăхсем хамăр тăван çĕршыва хÿтĕлеме пĕр çын пек пулса çĕкленчĕç. Совет халăхĕ, хăш нацирен, тата мĕнле тĕн тытнине пăхмасăр, вăрçа пĕтĕм ĕççыннисен ĕçĕ тесе шутлать.

Совет тылĕ хăйне хÿтĕлекен мухтавлă воинсене тивĕçлĕ пулчĕ. «Çырĕппĕнех çапла калама пулать, — тенĕ Сталин юлташ,—совет çыннисем тылра вăя шеллемесĕр ĕçлени, Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕпе пĕрлех, Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ çĕрте халăх нихăçан пулман паттăр ĕç туни историе кĕрсе юлать».

Пирĕн çĕршыв çĕнĕ 1944 çула промышленноçăн кирлĕ отраçлĕсенче производство планĕсене срокчен тултарнипе, танксем, тупăсем, минометсем, боеприпассем тата самолетсем туса кăлармалли 1943 çулхи задание ирттерсе тултарнипе кĕтсе илчĕ. Производствăра поточнăй методпа ĕçлессине анлăн сарса пыни, çĕнĕ рабочисем, уйрăмăнах хĕрарăмсемпе çамрăксем, йывăр профессисене вĕренсе алла илни, хамăр çĕршывра та нихăçан пулман социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пыни вăрçă çулĕсенче ĕç тухăçлăхне мирлĕ вăхăтринчен те ытларах ÿстерчĕç. Çав çитĕнÿсемпе совет рабочийĕсем тивĕçлипех мухтанаççĕ.

Анчах пирĕн çынсем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларма вĕренмен. Хĕрлĕ Çара пулăшасси тата ирĕке кăларнă районсенчи тăвансене пулăшасси çинчен сăмах пынă çĕрте совет халăхĕн ĕçри геройлăхĕ пĕр вĕçĕмсĕр ÿссе пырать. Пирĕн тыл татах та ытларах ĕç тума пултарать, ытларах тăвассишĕн кĕрешет те ĕнтĕ вăл халĕ.

Ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха ура çине тăратасси пĕтĕм халăхăн чи пысăк задачи пулса тăрать пулсан, вĕсемшĕн партипе правительство ялхуçалăхне çĕклес тĕлĕшпе тăвакан мероприятисем уйрăмăнах паллă вырăнта тăраççĕ. Çакна асра тытас пулать: фашистла вăрă-хурахсем ĕçлеме пултаракан çынсен чылай пайне Германие каторгăна хăваласа кайнă. Апла пулсан, хуçалăха ура çине тăратас пысăк задачăна пĕтĕм халăх пулăшмасăр кĕске вăхăтра пурнăça кĕртме йывăр пулать. Ку задачăна тĕпрен илсен вăрçă вăхăтĕнчех пурнăça кĕртмелле, мĕншĕн тесен пирĕн çара фронт çывăхĕнчи лайăх организациленĕ тыл кирлĕ.

Пĕтĕм халăхăн патриотла çĕкленĕвĕнче совет интеллигенцийĕн ĕçĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн ученăйсем, инженерсем, агрономсем тата ытти работниксем совет хĕçпăшалĕ фашистла захватчиксене лайăхрах пĕтертĕр, пирĕн промышленность тăшман промышленноçĕнчен лайăхрах ĕçлетĕр, колхозсен çĕрĕ пысăк тухăçлă тырпул паттăр тесе пĕтĕм вăйпа ĕçлеççĕ. Совет интеллигенцийĕ хăйĕн халăхне тивĕçлĕ пулнине кăтартса пачĕ.

Пирĕн государство пĕтĕм тĕнче умĕнче те тĕрĕслеве тÿссе ирттерчĕ. Совет Союзĕн авторитечĕ тĕнчери халăхсем тата правительствăсем умĕнче нихăçан та хальхи пек çирĕп тата çÿллĕ вырăнта пулман. Халĕ пурте çакна пĕлеççĕ: Совет Союзĕ, хăйне хÿтĕлесе, пĕтĕм этемлĕхе те фашистла Германи пусмăрлассинчен хÿтĕлесе хăварчĕ, пĕтĕм этемлĕхе Гитлерăн икĕ уралла тискер кайăкĕсенчен сыхласа хăварчĕ.

Опыт çакна кăтартса пачĕ: фашистла реакцилле государствăсем тата вĕсем тунă йĕркесем вăрçăн тĕрĕслевне тÿссе ирттерейменĕç. Нумаях пулмасть çавсене тăвакансем «пинцер çул» пуçпулса тăрасси çинчен, Римăн çĕнĕ чаплăхĕ тата фашистла свастика паллипе аталанмалли çĕнĕ тапхăр пуçланасси çинчен кăшкăратчĕç. Пурнăçра пачах та урăхла пулса тухрĕ. Итали фашизмĕ арканса кайрĕ, темиçе пин çул пуçпулса тăма ĕмĕтленекен Гитлерăн империйĕ катастрофа умĕнче тăрать. Венгрири, Румынири тата Финляндири фашизм хăйĕн Берлинри хуçи пулăшнипе кăна тытăнса тăрать. Асăннă йĕркесем политика тĕлĕшĕнчен путланса ларасси курăнсах тăрать ĕнтĕ.

Фашистла вăрă-хурахсем çĕмĕрсе тăкма шутланă Совет Союзĕ вара ишĕлми чул ту пек тăрать. Владимир Ильич Ленин çапла каланă: «Рабочисемпе хресченсен ытларахăшĕ хăй Совет влаçĕшĕн — ĕççынниксен влаçĕшĕн, хăйне тата хăйĕн ачисене культурăн пĕтĕм ырлăхĕсемпе, этем ĕçĕпе тунă пĕтĕм пуян пурлăхпа усă курма май паракан ĕçшĕн кĕрешнине пĕлсе, туйса тата курса тăрать пулсан, çавăн пек халăха нихăçан та çĕнтерме çук», тенĕ. Çак чаплă сăмахсем пурнăça кĕчĕç ĕнтĕ.

Европăрипе Америкăри государство деятелĕсем хушшинче çакна ытларах та ытларах ĕненсе пыраççĕ: вăрçă хыççăн Совет Союзĕ пек хăватлă держава активлăн хутшăнмасăр, тĕнчене йĕркелеме, халăхсем хушшинче çирĕп те вăрăм вăхăта пыракан туслăх тума май çук, тĕнчери политикăн ыйтăвĕсене сÿтсе-явнă çĕрте СССР вырăнĕ вăл вăрçăра мĕн тери вăйлă кĕрешнине кура пысăк пулмалла. СССР тĕлĕшпе çавăн пек улшăнусем пулни Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсен результачĕсенчен килнĕ, ăна Мускаври тата уйрăмăнах Тегеранри конференцисем уçăмлăн палăртса пачĕç.

Тегеранри конференци — тĕнчере малта тăракан виçĕ держава руководителĕсем пĕрремĕш хут тĕл пулни —СССР-па Англи тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем хушшинчи пĕрлĕх çирĕпленсе пынине, вĕсем гитлерла Германие тата унăн васалĕсене çĕнтерессине çирĕппĕн шанса тăнине, çавăн пекех тата вĕсем вăрçă хыççăнхи мирлĕ вăхăтра та пĕр-пĕринпе таччăн сыхăнса ĕçлеме хатĕр пулнине уçăмлăн кăтартса пачĕ.

Пирĕн халăх çĕнтерÿ çулĕпе шанчăклăн малалла пырать, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн пĕтĕм ĕçĕсенче — вăрçă, хуçалăх, государство тата политика ĕçĕсенче марксизм-ленинизмăн вилĕмсĕр вĕрентĕвне асра тытса тăрать. Сталин генийĕ пуянлатнă çак вĕрентÿ совет çыннисене социализм строительствин задачисене пурнăça кĕртме пулăшса пычĕ, пулăшса пырать те. Çав вĕрентÿ событисем мĕнле пулса пырассине курса тăма, тăшманăн планĕсене тавçăрса илме, государствăна ертсе пырас ĕçри кирлĕ ыйтусене тата СССР-ăн тулашри политика ыйтăвĕсене татса пама пулăшать.

Ленинпа Сталин большевиксен партине туптаса пиçĕхтерсе çитĕнтерчĕç. Пирĕн çĕршыври рабочисем, хресченсем тата интеллигенци хăйсен партине пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем унăн политики тĕрĕс пулнине куллен хыпурнăçра курчĕç. Вĕсем пирĕн партин ĕçне вăртăн ĕçленĕ çулсенче, асран кайми Октябрь кунĕсенче, граждан вăрçин геройла тапхăрĕнче курчĕç, вĕсем большевиксен партийĕ социализмлă строительствăн организаторĕ тата пирĕн государствăн руководителĕ пулса тăнине пĕлеççĕ. Ленин-Сталин партийĕ Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче те совет халăхне ертсе тата çул кăтартса пыракан вăй пулса тăрать, хăйсен чаçĕсене атакăна çĕклекен коммунистсен мухтавĕ нихăçан та аоран тухмĕ. Коммунистсем партизанла кĕрешĕве организациленĕ çĕрте те пысăк вырăн йышăнса тăнине Совет халăхĕ курса тăрать. Пирĕн халăх паха результатсем паракан социализмлă ăмăртăва пуçарса организациленĕ хăйĕн ывăлхĕрĕсен ĕçĕсене те нихăçан та манмĕ. Коммунистсем хăйсем малти ретре пырса, партире тăман большевиксен речĕсене, аслă çапăçусенчи тата хастарлă ĕçри геройсен речĕсене ÿстерчĕç.

«Вăрçă вăхăтĕнче,—тет Сталин юлташ,—парти халăхпа татах та ытларах тăванланчĕ, ĕççыннисен анлă массисемпе татах та таччăнрах çыхăнчĕ». 1942 çулта кăна, тăшман Атăл патне çывхарса Сталинград патĕнче тăнă чухне, партие пĕр миллион та 340 пин ĕççынни кĕнĕ. «Эпĕ вилсен, мана коммунист тесе шутлăр»,—тесе çыраççĕ Хĕрлĕ Çарăн темиçе пин воинĕсем çапăçăва кĕрес умĕн. Çак сăмахсенчен Ленин-Сталин партине шанса тăни тата ăна чĕререн юратни пысăккăн курăнать. Массăсем хăйсен партине çавăн пек парăннине истори курман-ха.

Аслă Сталин, Ленин каланисене пурнăça кĕртсе пырса, пирĕн парти ретĕнче никам аркатайми пĕрлĕх туса хучĕ. Эпир ăна пирĕн çĕршыв малта пыракан промышленноçлă тата колхозлă çĕршыв пулса тăнишĕн, пирĕн çĕршыв халăхсен тăванлăхĕпе туслăхĕн çĕршывĕ пулса тăнишĕн тав тăватпăр. Сталин юлташ ертсе пынипе ĕнтĕ совет стройĕ пирĕн тăван çĕршывăн хĕçпăшаллă вăйĕсене питĕ çÿле çĕклерĕ, ĕлĕк çавна тума май çук пек туйăннă. Хальхи чи хаяр вăрçăра, аслă Русь кун пекех тÿссе курман вăрçăра, Совет Союзĕ хăйне çĕнтерме памарĕ пулсан, эпир уншăн Сталин юлташа генилле ертсе пынишĕн тав тăватпăр.

Сталин юлташа чĕререн юратса тăнине Совет халăхĕ çĕнĕ çул ячĕпе панă рапортсенче тата чĕнсе каланисенче, патриотизмлă çĕнĕ çĕкленÿре, обязательствăсенче тата çапăçусемпе ĕçре çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хатĕр пулнипе палăртса пачĕ.

Аслă Ленин пире тунă çитĕнÿсемпе киленсе ларма, çитĕнÿсемпе лăпланса ларма юрамасть тесе вĕрентнĕ.

Халĕ, ĕçсем тăшмана тĕпренех çĕмĕрсе тăкасси патнелле пынă чухне, вăйсене тата та ытларах пухни, совет çыннисем тылра хăйсене шеллемесĕр ĕçлени, фронтра Хĕрлĕ Çар пĕлсе тата татăклăн кĕрешни кирлĕ. Ĕç тухăçлăхне ывăнма пĕлмесĕр ÿстерсе пымалла, хĕçпăшалсемпе боеприпассем кăларассине ÿстермелле, продукци пахалăхне лайăхлатмалла, нефть, кăмрăк кăларассине çĕклемелле, металл шăратассине ÿстермелле, электроэнерги туса кăларассине вăйлатмалла, транспорт ĕçне лайăхлатмалла, государство аппарачĕн пĕтĕм пайĕсене тĕрĕс те лайăх ĕçлекен тумалла.

Колхозниксемпе колхозницăсен, МТС-семпе совхозсен работникĕсен задачи ялхуçалăхăн тивĕçлĕ ĕçĕсене тума кăтартуллăн хатĕрленесси, çуракине ăнăçлăн ирттересси, тухăçлă тырпул туса илесси тата выльăх-чĕрлĕх йышне малалла ÿстерсе пырасси пулать.

Пирĕн пĕтĕм халăхăн нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха тата культурăна хăвăртрах йĕркелеме татах та ытларах пулăшас пулать. Пĕтĕм халăх хуçалăхне çĕнĕ вăйпа çĕклесе пырассишĕн тата фронта ытларах пулăшса тăрассишĕн пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва татах та вăйлăн сарса пымалла.

Ленинăн мухтавлă ялавĕпе, аслă Сталин ертсе пынипе совет халăхĕ, мĕнпур вăя çĕнĕрен пухса, гитлерла Германие тĕпренех çĕнтерессине татах та хăвăртлатĕ.

Сталин юлташăн кĕнекине вĕренеççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (Хамăр корр.). Харпăрхăй пĕлÿлĕхне ÿстерсе пырасси коммунистсен тивĕçĕ пулса тăрать. Çакна пурнăçлассишĕн чылай коммунистсем тимлĕн тăрăшаççĕ.

Партин Кивĕ Сĕнтĕрти пуçламĕш организацийĕнчи коммунистсем Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе кружок организациленĕ. Унта 5 коммунист тата комсомолецсемпе учительсем çÿреççĕ. Кружок руководителĕ Миронова юлташ занятисене интереслăн ирттерет. Кружок членĕсем, занятие конспектсем çырса, хатĕрленсе пыраççĕ. Пĕтĕмпе 6 хутчен заняти ирттернĕ. Кĕнекери пур разделсене те вĕренсе пĕтернĕ. Юлашки вăхăтра кружокра Сталин юлташ 1943 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладне вĕреннĕ.

Коммунистсем Сталин юлташăн кĕнекине вĕреннĕ чухне «Большевик», «Спутник агитатора» журналсенче тата «Правда» хаçатра пичетленнĕ статьясемпе усă кураççĕ.

Кружок членĕсем—коммунистсемпе комсомолецсем хăйсен пĕлĕвĕсемпе общестăлла ĕçре анлăн усă кураççĕ. Вĕсем хăйсем çумне çирĕплетнĕ участоксенчи колхозниксем хушшинче агитацилле-массăлла ĕçе туса пыраççĕ. Колхозниксем хушшинче калаçусемпе докладсем ирттереççĕ.

Кивĕ Сĕнтĕр ялсоветне 4 колхоз кĕрет. Вĕсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Вăл колхозсенче кашнинчех коммунистсем пур. Парторганизацие ялсовет исполкомĕ мала тухакан колхоза пама куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав тунă. Çак ялава халĕ «Искра Первая» (председателĕ коммунист Квасов юлташ) тытса тăрать.

Ку колхоз 1943 çулта гектартан 100 пăт ытларах тĕштырă туса илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарнă, государствăна аванс шучĕпе 1944 çулшăн тырă чылай панă, аш-какай памалли 1945 çулти плана 50 процент тултарнă.

Калас пулать, лайăх вĕренекен коммунистсемпе пĕрлех хăйсен пĕлÿлĕхне ÿстерме тăрăшман, «Эпĕ ахаль те нумай пĕлетĕп», тесе каппаякан коммунистсем те тĕл пулаççĕ-ха. Хатĕрлев наркомачĕн Комсомольски районĕнчи уполномоченнăйĕ И. Мурзуков юлташ хăйĕн политикăллă пĕлĕвне ÿстерессишĕн тăрăшмасть. Вăл политикăллă докладсене итлеме, докладсем тума та юратмасть. Хаçат-журналсем вуламасть, час-часах ялсенче пулать пулин те, пухусенче тухса калаçмасть.

С. ШАДИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

* * *

Ленинград фрончĕн çарĕсем пилĕк кун каялла наступлени пуçласа янă. Пулково районĕнчен тапăнса пыракан пирĕн çарсем нимĕçсен нумай вăхăтлăха тунă, вăйлă çирĕплетнĕ сборонине татнă. Кунти оборонăра нимĕçсем тимĕрпе бетон дотсем, броньăланă калпаксем, дзотсем тата çĕр айĕн çÿремелли çулйĕрсем темĕн чухлĕ туса тултарнă, вĕсене пурне те мина хирĕсемпе, пралук картисемпе тата танксене чармалли чăрмавсемпе картласа пĕтернĕ. Çав укрепленисене нимĕçсем пурне те çар инженери искусствинчи çĕнĕ пĕлĕвĕсем тăрăх тунă, унта вĕсем вут-çулăм тăкмалли хатĕрсем темĕн чухлĕ лартса тултарнă. Малалла куçса пынă май пирĕн çарсем çирĕплетнĕ укрепленисен иккĕмĕш тăрăхĕ патне пырса тухнă. Совет пехотинецĕсем, танкисчĕсем тата вĕсемпе пĕрлех малалла пынă артиллери тăшман оборонин çав тăрăхне те çĕмĕрсе тăкнă та паян Красное Село хулине, нимĕçсем крепость туса хунăскерне, штурмласа тытса илнĕ. Ораниенбаумран кăнтăртарахри районран малалла тапăнса пыракан пирĕн çарсем, наступлени пуçласа ярса, нимĕçсен шалалла нумай инçене тăсăлса выртакан оборонине татнă та, çав тери хăвăрт атакăласа, нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ питĕ пысăк пунктне, çулсен питĕ кирлĕ узелне—Ропшана тытса илнĕ. Нимĕç захватчикĕсенчен Петергоф хулине тата халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла ирĕке кăларнă. Çапăçусем пулса иртнĕ вырăнсенче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе пин вилли сапаланса выртать, çĕмĕрсе тăкнă техника, çавăн пекех тата нимĕçсем каялла чакнă чухне пăрахса хăварнă хĕçпăшал йăтăнса выртать. Пирĕн çарсем тытса илнĕ трофейăсем хушшинче йывăр тата йывăртан та йывăр 36 тупă пур, вĕсемпе нимĕçсем Ленинград хулине персе тăнă.

* * *

Новгородран çурçĕртерехре пирĕн çарсем, артиллери хăватлăн персе хатĕрленĕ хыççăн, наступлени пуçласа янă. Пехотăпа танксене çул уçса парас тесе, совет артиллерисчĕсем тăшманăн вут-çулăм тăкакан вырăнĕсене темĕн чухлех пусарса лартнă. Нимĕçсен оборонине татса вăйлăн çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем халăх пурăнакан 80 пункта ытла тытса илнĕ. Пуринчен те хаяртарах Вешки ятлă ял районĕнче çапăçнă. Нимĕçсем кунта пысăк вăйсем пухнă та татти-сыпписĕр контратакăсем тунă. Пирĕн çарсем гитлеровецсен икĕ полкне аркатса тăкнă, ăста маневр туса, тăшмантан çав тĕреклетнĕ пункта тытса илнĕ. Тепĕр ял районĕнче совет боецĕсем нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисен хисепĕ пысăк. Новгородран кăнтăртарахра пирĕн Ильмень кÿлли урлă каçса кайнă çарсем чылай пунктсем тытса илнĕ, халĕ тăшманпа ăнăçлăн çапăçса малалла куçса пыраççĕ.

* * *

Новосокольникирен çурçĕртерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Нимĕçсем кунта васкаса резервсем илсе пынă та, контратакăсем тăва-тăва, совет чаçĕсем малалла куçса пынине чарса лартма хăтланаççĕ. Насва ятлă чугун çул станцийĕнчен хĕвеланăçнерехре уйрăмăнах вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Пирĕн боецсем тăшманăн пур контратакисене те ăнăçлăн сирсе янă, 1.500 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр районра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ.

* * *

Новоград-Волынский хулинчен хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Ровно облаçĕнчи Гоща ятлă район центрне тытса илнĕ. Гощашăн пынă çапăçусенче совет пехотинецĕсемпе танкисчĕсем тăшман пехотине пĕр полка çити аркатса тăкнă. Нимĕçсенчен артиллерипе минометсен темиçе батарейине, çавăн пекех тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Днепропетровскран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр участокра Ткач лейтенант командир пулса ертсе пыракан снайперсен команди кĕрешет. Командăра 22 боец. Çав снайперсем сакăр кун хушшинче (январĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа 18-мĕшне çитиччен) нимĕçсен 216 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Ткач лейтенант, Абзалимов ефрейтор тата Козявин красноармеец çав вăхăт хушшинче кашни 15-шер нимĕçе вĕлернĕ. Шарифулин кĕçĕн сержант, Раджабовпа Джаркимбеков красноармеецсем кашни 13-шер гитлеровеца пĕтернĕ.

Ют çĕршывсенче

Нельсон каланă сăмах

ВАШИНГТОН, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çар производствин управленине тунăранпа тата унăн председательне Нельсона лартнăранпа икĕ çул çитнĕ май банкет пулса иртнĕ. Банкетра сăмах тухса каланă Нельсон совет руководителĕсемпе совет халăхĕ çинчен питĕ ырласа калаçнă тата Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ хушшинче малашне тачă çыхăну тăвасси çинчен шанса каланă. Çавăн пекех вăл çар производствин управленийĕн икĕ çулхи ĕçĕсем çинчен тата Англипе Америкăн Пĕрлешÿллĕ комитечĕсен çав вăхăтри çитĕнĕвĕсем çинчен кĕскен каласа панă.

Пĕрлешÿллĕ нацисем хушшинче экономикăллă çыхăну аталанса пынине палăртса, Нельсон çапла каланă: «Российăра эпĕ илтни тата хам куçпа курни мана çав аслă çĕршывăн руководителĕсемпе халăхĕ пирĕнпе çыхăнса тăма тăрăшнине ĕнентерчĕç. Пур çĕршывсем те пĕрлешсе ĕçлени тата нумай вăхăта тăсăлакан мир кăна Российăна хăвăрт аталантарма пултарассине вĕсем пĕлсе тăраççĕ. Çак ыйту ĕнтĕ вĕсене пуринчен ытла интереслентерет. Пирĕнпе Англи пекех, вырăссем урăх территорисемшĕн çунмаççĕ. Эпир те, вĕсем те пĕр япалашăн—пурнăça лайăхлатассишĕн тăрăшатпăр. Тĕнчери рынoксемшĕн пыракан кĕрешÿре вĕсем пирĕнпе конкуренци тумаççĕ. Чи малтанах вĕсем хăйсен рынокĕпе тата ăна аслăлатма пултаракан таварсем улăштарассипе интересленеççĕ. Сталинпа, Молотовпа тата Совет правительствин ытти членĕсемпе пулса иртнĕ калаçусенче эпĕ вĕсен реализмне, ыйтусем çине вĕсем тÿрремĕн пăхнине куртăм. Çакăнта ĕнтĕ вĕсем хăйсене хăйсем хисеплени палăрать. Çаксем пурте мана эпир Российăпа хамăршăн, вырăссемшĕн тата пĕтĕмĕшле çирĕп миршĕн усăллă ĕçсем тума пултарнине кăтартрĕ.

Пирĕн вăхăтри политикăллă пысăк ыйтусем тĕлĕшпе нумай мала курма пултаратăп тесе калама пултараймастăп эпĕ, тенĕ малалла Нельсон. Анчах та мĕн курни çакна ĕненсе тăма шанчăк парать: тĕнчери фашизм хăрушлăхне пĕтерсенех этемлĕх историйĕнче пирвайхи хут аслă державăсем пирĕн халăхсем кĕтсе тăракан мирĕн, хăрушсăрлăхпа ирĕклĕхĕн никĕсне хума пултарĕç».

Нельсон Америкăри фашистла элементсене хирĕç, «хăйсене американецсем текен, анчах та ирĕклĕхе, демократие тата Америкăшăн чи хаклине курайман» çынсене хирĕç каланă. «Пур фашистсем пекех, вĕсем хăйсен противникĕсене вăйпах пусарасшăн», тенĕ.

США-н вице-президенчĕ Уоллес Нельсона тĕнче картине парса парнеленĕ. Вăл карта çинче Нельсонăн Англипе СССР-а кайнă çулне паллă тунă. Картăна илсе, Нельсон çапла каланă: çак карта мана Англипе Совет Союзне кайни çинчен аса илтерсе тăрĕ. Унта эпĕ çав тери хастарлăн тата çав тери ăслăн туса пыракан çар производствине куртăм, тенĕ.

Иден общинăсен палатинче калани

ЛОНДОН, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден паян общинăсен палатинче, хăйне панă ыйтусене ответлесе, Совет Союзĕпе Польша хушшинчи çыхăнусем çинчен сăмах каланă. Иден çапла каланă: Англи правительстви çак ĕç çинчен шухăшлать, вăл çак тĕлĕшпе хăйĕн союзникĕсемпе—Совет Союзĕн правительствипе тата Польшăн Лондонри правительствипе тачă çыхăну тытать. «Пирĕн тĕп шухăш,—тенĕ Иден,—çав ик çĕршыва пĕр-пĕринпе туслăн килĕштересси пулса тăрать, вĕсем килĕшни Европăн пуласлăхĕшĕн питĕ пысăк ĕç туни пулнă пулĕччĕ. Ыйтăва кăмăлла татса парассине шанма пăрахман эпир». Ытти ыйтусемпе пĕрле Иден Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче Испани çарĕсем пурри çинчен ыйтнине те ответленĕ. Англин Мадридри послĕ «Испани правительствине тепĕр хут хытă асăрхаттарма инструкци илнĕ», тенĕ Иден.

Иден малалла çапла каланă: Итали правительстви Испани порчĕсенчи мĕнпур суднисене ирĕке кăларма ыйтнине Англи правительстви кăмăлланă, ăна пурнăçлама пулăшнă.

Черчилль де Голльпе Маракеш хулинче тĕл пулса калаçни

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ çумĕнчи хăйĕн корреспонденчĕ пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă: «Юнкун, январĕн 12-мĕшĕнче, Англин премьер—Министрĕ Черчилль Маракеш хулинче (Франци Марокки) де Голль генералпа тĕл пулнă. Премьер-министр Маракеш хулинче пулнă хушăра пачах сывалса çитнĕ. Черчилльпе пĕрле унăн арăмĕ, лорд Бивербрук тата Дафф Купер хăй арăмĕпе пулнă. Де Голль генералпа пĕрле унăн канцелярийĕн пуслăхĕ Палевский пулнă.

Черчилльпе де Голль юлашки хут 1943 çулхи июнь уйăхĕнче, де Голль Çурçĕр Африкăна килнĕ хыççăн, тĕл пулса калаçнăччĕ. Хальхи тĕлпулу çавăн хыççăнхи пĕрремĕш тĕлпулу пулса тăрать. Январĕн 12-мĕшĕнче тĕл пулнă хыççăн де Голль Черчилль патĕнче пулса иртнĕ ирхи апатланура пулнă. Апатланура Маракеш хулине Черчилльпе пĕрле пынă çынсем те пулнă. Çавăн чухне Францирпе Англи хутшăнăвĕсен принциплă ыйтăвĕсене сÿтсе-явнă, çавăн пекех тата тăшмана çĕнтермешкĕн пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçлессин тĕрлĕ ыйтăвĕсене пăхса тухнă.

Тепĕр кунне Черчилль де Голль чĕннипе Маракешри парадра пулнă.

Январĕн 13-мĕшĕнче де Голль икĕ кунлăха Алжира тухса кайнă. Унта вăл Франци халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитета вĕсем Черчилльпе иккĕшĕ мĕнле ĕçсем пирки сÿтсе-явни тата калаçса татăлни çинчен каласа кăтартма кайнă. Британин премьер-министрĕ тата Франци халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет пуçлăхĕ кун йĕркинче тăракан нумай ыйтусене сÿтсе-явнă. Вăл ыйтусем пурте Франци халăхĕ пĕрлешÿллĕ нацисемпе пĕр пулса тăшманпа кĕрешес ыйтусем. Ытти ыйтусем хушшинче вĕсем çак ыйтусене сÿтсе-явнă: Европа континенчĕ çине çĕмĕрсе кĕрсе каяс ĕçе ертсе пырасси, çав ĕçре Франци çарĕсем мĕнле вырăн йышăнса тăрасси, союзниксем континент çине кĕрсе кайсан Францин вăхăтлăх правительствине тăвасси тата Францин Хĕвеланăç Африкăри пулнă генерал-губернаторне Буассона, Францин премьер-министрĕ пулнă Фландена, Алжирта посол тата генерал-губернатор пулса ĕçленĕ Пейрутона тăшмана сутăнса ĕçленĕшĕн суд тăвасси çинчен. Халĕ паллă пулнă тăрăх, çав пулас суд çинчен Англипе Америка правительствисем Франци халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетран ахаль йĕркепе ыйтса пĕлнĕ пулнă.

ЧЕРЧИЛЛЬ АНГЛИЕ ТАВРĂННИ

ЛОНДОН, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль паян Лондона çитнĕ.

ВИШИ УРАМĔСЕНЧЕ ПУЛЕМЕТСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Вишире тата унăн таврашĕнчи вырăнсенче, Германи çарĕсем пĕтĕмпех йышăнса илнĕскерсенче, урамсем хĕресленнĕ вырăнсенче пур çĕрте те пулеметсем лартса тухнă.

АНГЛИН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТЕРСТВИ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Правда» хаçатăн Каирти корреспонденчĕ хăйĕн телеграмминче çакăн пек каланă пулнă: кунти хыпарсем тăрăх, Англин ертсе пыракан икĕ деятелĕ Риббентроппа тĕл пулнă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Британин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви çав хыпар тĕрĕс мар тесе каланă.

АВСТРИРИ ЛАРУ-ТАРУ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Нюа даглигт аллеханда» хаçатăн корреспонденчĕ çапла çырать: нумаях пулмасть эпĕ Австрие, уйрăмăн илсе кăтартсан—Штири провинцийĕнчи Грац хулине кайса килтĕм. Унта гитлеровецсем хуçаланнă пирки пур çĕрте те асапла хуйхă çеç. Грац хулинче нумай хĕрарăмсем траурлă хура тумтир тăхăнса çÿреççĕ, госпитальсем аманнисемпе тата чирлисемпе тулса ларнă, магазинсем пушах лараççĕ, гитлеровецсем Австри халăхĕ çине тăшман çине пăхнă пек пăхаççĕ. Корреспондент каланă тăрăх, Штирири çынсен нумайĕшин пĕр шухăш çеç. Гитлерла йĕркене часрах пĕтересчĕ, теççĕ вĕсем.

Ответлă редакторшăн П. Т. ЗОЛОТОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00518 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз